# Ф.Павлов - сентименталист, е унӑн пултарулӑхӗнчи асар-писер туйӑмлӑх

"Эпӗ сентименталист мар, анчах сентименталлӑ историсене юрататӑп" (писательсен калаҫӑвӗнчен).

Литература тени ӗмӗртен икӗ майлӑ яр уҫӑ курӑнакан ҫулпа аталанса пынӑ. Пӗри вӑл - идея, шухӑша уҫӑмлӑ палӑртаканни, тепри вӑл - идея шӑнӑрӗсӗр е туйӑмлӑ литература. Шӑпах вичкӗн

туйăм-сисĕмлĕ илемлĕ хайлавсем часах кивелмеççĕ, мĕншĕн тесессĕн вĕсенче - этем чунне хускатма-кисретме, хумхантарма пултаракан чи ансат ĕçсемпе геройсем, урăхла каласан, кулленхи пурнăç юхăмĕ. Çак туйăмлă, хĕрхенÿллĕ-куççуллĕ, çивĕч драматизăмлă, вырăн-вырăнпа шÿтлĕ-ирониллĕ литература сентиментализм юхăмĕнченех килет те, çапах та реализм вăйлă аталаннă тапхăрсенче социаллă аура (геройсене хупăрласа тăракан самана) çыравçăсен сентименталлă туртăмĕсене çивĕчлетет çеç, геройсен чун вылявĕсене тата асар-писертерех, арпашуллăрах туса ярать. Шăпах сентименталлă романсемпе киносериалсем ("Унесённые ветром", "Рабыня Изаура", "Богатые тоже плачут") хăйсен ансатлăхĕпе литература эстечĕсене "тарăхтараççĕ", ахаль вулакапа куракана вара, пĕлÿ шайне пăхмасăрах, анраса кайиччен геройсен шăпипе кăсăклантараççĕ, сюжет хăй патĕнче хĕскĕчпе хытарса лартнă пек тытать.

Ф.Павлов пултарулăхĕнче те çак сентименталлă туртăм питĕ вирлĕ палăрать, палăрать çеç мар, этем туйăмĕсен урăм-сурăмĕ соцреализм литературовечĕсем питĕ кăмăллакан социаллă ыйтусене ним мар хăйĕн вăйлă хумĕсем айне тăвать, çыннăн кулленхи туйăмĕсем идеологине те, патшалăх тытăмне те пăхăнманнине ĕнепме парать. Ф.Павлов драмипе комедийĕн конфликчĕсене пĕлтерĕшлĕрех тăвас тесе-ши, хальччен критиксем вĕсенче класслăх текен принциппа социаллă шухăшсене çеç куратчĕç (çамрăк тĕпчевçĕсем хальтерех ку шухăша сирсе ячĕç). Ф.Павлов генилĕхĕ - унăн хайлавĕсен конфликчĕсен ансатлăхĕ: кулленхи пурнăç хирĕçĕвĕсем вĕсенче, эпир кашни кун пырса çапăнатпăр вĕсемпе. Вĕсемех - хамăр пурнăçăн камичĕ те, драми те, трагедийĕ те. Этем чун-чĕрин чи ыратакан, чи ачаш вырăнĕсене пырса тивтерет Ф.Павлов хайлавĕсенче пулса иртекен драматизмла ĕç-хĕл.

Арçынпа хĕрарăм хутшăнăвĕсен асамлăхĕ, асаплăхĕ, кулăшлăхĕ, çивĕчлĕхĕ, трагедилĕхĕ (ясарлăхĕ те çук мар!) вăй парать Ф.Павлов драматургăн ăсталăхне. Çак сентименталлă ăсталăх туртăмне авторăн хăйĕн тумхахлă, йывăр, телейсĕр пурнăç шăпипе çыхăнтарма пулать. Хĕрарăмсемпе хутшăнса Ф.Павлов телей тупайман (икĕ хут ăнăççăр çемье чăмăртама хăтланни, малтанхи телейсĕр юратăвĕ, çывăх хĕрарăмĕ арçынсемпе куç умĕнчех йăкăлтатни). Çавна пулах-и, тен, унăн хĕрарăм-героинисем питĕ хăйнеевĕрлĕ. Ф.Павловăн сентименталлăхĕ илĕртÿллĕх мар, вĕсенче ачаплăх тени те, романтикăлла çĕкленÿлĕх те сисĕнмест. Вăл трагедилле, тарăн психологиллĕ е шÿтлĕ-камитлĕ. Синкерлĕ сентименталлăха эпир "Ялта" драмăра, иронилле вара "Судра" комедире куратпăр.

"Судра" комедире Сăпани те, Ухтеркке те, çемье ăшши тахçантанпа курманскерсем, хăйсен савнийĕсемпе вăрттăн тĕл пулаççĕ, çавăнпах пĕр-пĕрне кĕвĕçсе-тулхăрса пурăнаççĕ. Ўтпе чун

ыйтнă сывăх сынпа туйпах пĕрлешессине пĕлсен çеç вĕсем судра пĕр-пĕрне каçараççĕ. Çак пĕчĕк сентименталлă, шÿтлĕ историрен эпир пурнăç таппин вăйне сисетпĕр: Ухтерккен чăркăшрах кăмăлне те, Сăпани, çамрăклах хусахра çÿресе касăлнипе, кăштах йăкăлтирех пулнине те каçаратпăр. Пурнăç пушăлăха юратмасть, вăл хăйĕннех илет, пĕччен пурăнма пÿрмен-çке этеме, тетĕн вара.

"Ялта" драмăри сентименталлă юрату историйĕ кăткăсрах, тарăнрах. Геройсен характĕрĕ те сулăмлăрах. Автор хăйĕн геройĕсене ăнсăртран килекен эпизодсенче тĕрĕслет: Ванюк хăйĕн арăмне "еркĕнпе" тытать - Çтаппан арăмĕ вилет - пушар тухать- Ванюка салтака илсе каяççĕ - ача вилет - Елюк шыва сикет - туя Ванюк пырса кĕрет - Елюк вилет...

Юрату, кĕвĕçÿ, ултав, ухмаха ернĕ герой, эротикăллă сценăсем, çивĕч диалогсем... Пĕр туй йăли-йĕркине тĕппипех сырса кăтартни çеç сентименталлă драматизм картине ларман пек туйăнать.

Ф. Павлов хĕрарăмĕсĕм яланах пĕччен шăпаллă, арçынĕсене те телейлĕ теме çук. Çылăхсăр, таса герой та çук унăн. Анчах хăйĕн çылăхлă геройĕсене те автор ăнланма, хĕрхенме тăрăшать. Калăпăр, Çтаппан хĕрарăмсем çумне çыпçăннин сăлтавне хĕне кайнă арăмĕпе çыхăнтарать, вăл та туйăмлă çынах пулнине систерет. Сăпани арçын тупса янин сăлтавне те хăйĕн тăван упăшки вăрçăра вилнĕ хыççăн тунсăхласа çитнĕ çамрăк хĕрарăм организмĕ ыйтнипе ăнлантарать. Урăхла каласан, чăн-чăн сентименталист Ф.Павлов.

Геройсем çемье тĕрекне тупайманнине те автор шăпипе çыхăнтарма пулать пулĕ. Елюк туй çĕррине ывăтса хăйĕн малтанхи çемйине аркатни, пĕччен пурăнакан Пăрчкан (вăхăтлăха арçынпа йăпаннине шута илмесен) асапланни... Драмăра Ф.Павлов хĕрарăмра çемье тĕрекĕ курмасть. Елюкăн телейсĕр шăпи те хăйĕн чикесĕр тапса тăракан арлăх туйăмĕсенчен килме пултарасса эпир малтанхи сценăсенченех куратпăр: Йăскар куçĕ умĕнчех çамрăксем çылăха кĕреççĕ, пĕрлешмесĕрех, хăйсен телейне çывхартас тесе. Асар-писер, урăм-сурăм çаврăнать Елюк пуçĕ, икĕ арçын танатине лекнĕскер, иккĕшне те хĕрхенекенскер, анчах чун çирĕплĕхĕсĕрскер. Çтаппан шывран çăлсанах, Елюк: "Ман пурнăça çăлнăшăн-эпĕ санăн..." тесе ярать кĕтмен çĕртен. Автор Елюк хăтланăвне хак памасть. Çапах та сентименталлă истори тĕллевĕ-ялти çамрăк мăшăрăн шăпине тĕрлĕ пăтăрмахсем урлă кăларса сăнасси. Çапла тунă та драматург.

Сентименталлă юрату историйĕ трагедиллĕ вĕçленет пулин те, эпир автор туйăмĕсен хĕрхенÿллĕ сăн-сăпатне сисетпĕр. Чăн-чăн литературăра автор туйăмĕсемпе вулакан туйăмĕсем пĕр-пĕрне шыраççĕ, тупаççĕ те. Ф.Павлов сентименталист пулни унăн классика шайне пĕчĕклетмест, вăйлатать çеç. Павловла сентименталлă традицисем чăваш литературинче паян кун та пурри çакна чĕррĕн ĕнентерет. Пурнăçăн кулленхи ансатлăхне сăнласси - чи йывăр ĕç.

Апла пулсан литературăри сентименталлă историсен пуласлăхĕ питĕ пысăк.

1992 ç.